# ШĂНКĂРАВ



27-мĕш номер

2024-МĔШ ÇУЛХИ ÇĔРТМЕ УЙĂХĔ



**«САНАР»**
**кану лагерĕ хыпарлать…**

## ШКУЛ ХЫПАРĔСЕМ

*********************************

Тăван тавралăхăм………………………...2 с.
Кану лагерĕнчи савăк вăхăт…….............3 -5 с.

**Шкул хаçачĕ**
**2022 –мĕш çулхи**
**нарăс уйăхĕнчен тухма пуçланă**

**Ертӳçисем:**
**Ермошкина Раиса Николаевна**
**Сютова Кристина Васильевна**









**Тăван çĕр-шывăм**
**сарлака, илемлĕ**
**чечекленет, илĕртет, хавхалантарать**
**«Тăван çĕрĕн тусанĕ те пылак», - тенĕ пĕр ăслă çын.**
**ытарайми çут çанталăк**

**«Санар» кану лагерьне çӳрекен ачасем пĕр хĕвеллĕ кун тăван тавралăх тăрăх çул çӳреве тухрĕç. Шăкăлтатса пынă май ял илемĕпе киленчĕç.**

**Урампа анса кайсан Пысăк пĕве патне çитсе тухма пулать. Кунта Улăп тăприсем те пур. Çăпатине пĕрре кăна мар хывса силленĕ- мĕн ку вырăнта Паттăр. Унăн ыйхи канлех мар пулмалла. Пĕр аякран тепĕр аяк çине çаврăнать, ӳппĕн те, месерле те выртса пăхать…**

**Тăван Çĕр-шывăмăр шăпи таканари шыв пек пăтраннă вăхăтра хуп турттарни килĕшӳсĕр тесе шухăшлать пулмалла. Вăхăт çитессе чăтăмсăррăн кĕтет ахăр…**

**Пĕвери шыв та лăпках мар, хумханать. Пĕве çийĕн шур чарлансем вĕçеççĕ – апатланма хатĕрленеççĕ.**

**Хысакра çĕр çырли нумай çуралнă, хĕр пĕркенчĕкне аса илтерсе лараççĕ. «Пураксене хатĕрлесе хурар, кĕçех çырлана килĕпĕр», - тĕв турĕç ачасем.**

**Тавралла сăнаса пăхăр-ха, епле илемлĕ!!! Шупка-сарă-шурă-симĕс тĕссем куçа йăмăхтараççĕ. Акă ăçта пытаннă вăл Çĕр çинчи çăтмах!!!**

**Куркаласа çӳренĕ хыççăн шăпăрлансем хырăм чĕпĕткеленине туйрĕç, кахал апачĕ турĕç. Уçă сывлăшра хура çăкăр та тутлăн туйăнса кайрĕ.**

**Тăвайккинчен аялалла чупса аннă чухне алла икĕ еннелле сарсан çунат хушнăн туйăнать, таçталла ирĕкелле вĕçсе каяс килет пек…**

**Уçă сывлăшра «шкул тусанне» сывласа кăларнă хыççăн ачасем килелле çул тытрĕç.**

**Ытарайми Тăван Çĕр-шыв, санăн чĕрӳ ирĕклĕн таптăр! Тӳпе яланах янкăр кăвак пултăр!**



*Хаваслă*
*çулталăк вăхăтне*
*мухтатпăр!*
*Ўнерçĕ кунне*
*уявлатпăр!*











**Çу кунĕсене чăтăмсăррăн кĕтетпĕр –**
**Асфальт питне пурăпала чĕретпĕр.**





**Туссем, эсир пĕлетĕр- и, нумаях пулмасть эпир лагерьте Хăмпă кунне уявларăмăр. Мĕнле кăна уяв çук пуль çак Çĕр çинче – пирĕн лагерьте…**

**Ачасем пурте хăмпă илсе килнĕ: лавккара сутăнаканнисене те, шампуньрен тунисене те, супăнь хăмпине те.**

**«Эсир пĕлетĕр-и?» викторина ыйтăвĕсене хуравланă хыççăн отрядăн-отрядăн пайланса хăмпă вĕçтерме пуçларăмăр. Мĕн тĕрли çук пулĕ кунта: çавраки, тăсмакки, пĕчĕкки, пысăкки, хĕрли, сарри, çутти, тĕксĕмми,, шурри, тĕссĕрри.**

**Юмах тĕнчине лекнĕн туйăнать – «Хăмпă» çĕр-шывне. Хитрескерсем вĕçеççĕ-вĕçеççĕ те, пăнч! çурăлса куçран çухалаççĕ. Пĕр-пĕринпе хăваламалла выляççĕ тейĕн. Тутлă шăршă тăрать.**

**Ача-пăча шавлă, кăмăллă! Уяв пурне те килĕшрĕ.**

**Туссем! Епле илемлĕ те хаваслă вăл – ачалăх кунĕ. Ĕмĕр манми. Ачалăхран уйрăлма ан васкăр!!!**

**Шкул корреспонденчĕ**



